*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮНКУН

93 (2505) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
декабрь/раштав 3

ХŸТЛĔХ

# Пин-пин çын ĕмĕчĕ тулать!

**Ĕç ветеранĕ ятне тивĕçмелли стаж икĕ çул çурă чакать.**



*Стажа кура ĕç ветеранĕн ятне илекенсен хисепĕ*

Нумай çул ĕçленĕ çынсене патшалăх пулăшăвĕ парас тĕллевпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ноябрĕн 26-мĕшĕнче «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята илмелли стажа 2,5 çул чакарма указ кăларнă. Çĕнĕлĕх 2015 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрĕ. 37 çул та 6 уйăхран кая мар ĕç стажĕ пухнă хĕрарăмсем тата 42 çул та 6 уйăх ĕçленĕ арçынсем хисеплĕ ята тивĕçĕç.

Асаилтеретпĕр: ĕç стажĕпе ветеран ятне парасси 2012 çулхи январь уйăхĕнчен пуçланнă. Унччен «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята Чăваш Енри 2089 çын тивĕçнĕ. Паянхи кун пысăк ĕç стажне кура 27 пине яхăн çыннăн «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят пур. Çĕнĕ указ вăя кĕрсен хисеплĕ ята тивĕçекенсен йышĕ тата 10 пинрен кая мар хушăнĕ.

Сумлă ят пурри ĕç ветеранĕсене пенси çумне уйăхсерен 1082 тенкĕ илме тата çыхăну пулăшăвĕсен тӳлевĕн çуррине чакарма май парать.

Нумай-нумай çын çак указа чунтан кĕтсе пурăннă. Редакцие вун-вун çыру килетчĕ: «Ĕç ветеранĕ стажа тивĕçме 1 уйăх та 9 кун çитмест», «40 çула çулталăк ĕçлесе çитереймерĕм», «Мĕншĕн ĕç ветеранĕ ята тивĕçмелли стажа чакармаççĕ-ши: çултталăк та 1 уйăх çитмест?» Тинех вĕсен ĕмĕчĕ тулать! Вĕсемшĕн эпир чунтан савăнатпăр.

РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева çак указшăн савăннине пĕлтерет: «Республикăра ĕмĕр тăршшĕпех тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăннă, анчах нимĕнле наградăна та тивĕçмен çын нумай. Аслă ăру çыннисемпе тĕл пулнă самантсенче республика ертӳçи ветеран стажне чакарма майсем шырамалли пирки пĕрре мар каланă. Укçа-тенкĕ тупма йывăррине пăхмасăрах вăл хăйĕн сăмахне тытма пултарчĕ».

«Ветеран стажне тивĕçме 1,5 уйăх çитменччĕ манăн, – тет Красноармейски районĕнче пурăнакан хĕрарăм. Куçăхтарасран хальлĕхе ятне-шывне те каламарĕ вăл, анчах хĕпĕртенине пытараймарĕ. – Шĕкĕр Турра, çак вăхăта пурăнса çитрĕм. Тавах, Михаил Васильевича! Амăшĕсен кунĕ тата Çĕнĕ çул умĕн чи пысăк парне пулчĕ ку».

**Елена НИКОЛАЕВА.**

ÇЕМЬЕ

# Çĕршыв тĕрекĕ

**Амăшĕсен кунĕ умĕн Шупашкарта «Çулталăк çемйи – 2014» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисене чысларĕç. Асăннă конкурс маларах районсенче иртнĕ. Унта 158 çемье хутшăннă. Пĕрремĕш турта мала тухнă 28 çемье республика шайĕпе ăмăртрĕ. Сăмах май, ку мероприятие Чăваш Енре 11 çул ирттереççĕ. Çак вăхăтра унта 2 пин ытла çемье хутшăннă.**

«Паян эпир чи-чи маттур çемьесене чыслатпăр, – терĕ ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова уява пухăннисене. – Çĕр çинче чи телейлĕ çынсем вĕсем – амăшĕ, ашшĕ тата ачисем».

Юлашки вицĕ çулта пирĕн республикăра нумай ачаллă çемьесен шучĕ 20 процент ӳснине палăртрĕ Алла Владимировна. Маларах çемье икĕ ачапа çырлахнă пулсан, паянхи кун кашни вунвиççĕмĕшĕ виçĕ ача çитĕнтерет. «Алла пулсан вĕсем ыранхи куна шанаççĕ», – палăртрĕ министр. Çавăн пекех вăл нумай ачаллă çемьесене тивĕçекен патшалăх пулăшăвĕсем пирки те сăмах хускатрĕ. Республикăра çине-çинех хута каякан ача сачĕсем çинчен те манмарĕ: кăçал 15 ача сачĕ уçăлмалла.



Республика Пуçлăхĕ Егоровсен çемйипе

Амăшĕсен кунĕ ячĕпе залра ларакансене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та саламларĕ, сывлăх, телей сунчĕ. Республикăри нумай ачаллă çемьесене патшалăх тивĕçлĕ пулăшнине палăртрĕ. Çавăн пекех аслă вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлев чăваш халăхне панă халалри сăмахсене аса илтерчĕ. «Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл – халăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать...» – тенĕ Иван Яковлевич.

Çемьесене ĕçченлĕхе, пултарулăха, вашаватлăха кура тĕрлĕ номинацие палăртрĕç. Сăмахран, «Ĕçчен çемье» номинацире – Михайловсем (Тăвай районĕ), «Пултаруллă çемье» – Ивановсем (Шупашкар хули), «Социаллă яваплă çемье» – Володинсем (Улатăр районĕ), «Туслă çемье» – Нестеренко (Çĕмĕрле хули), «Спортпа туслă çемье» номинацире Прокопьевсем (Комсомольски районĕ) çĕнтерчĕç. «Çулталăк çемйи» ята Шупашкарта пурăнакан Егоровсем тивĕçрĕç. Марина Анатольевнăпа Алексей Леонидович 9 ача çитĕнтереççĕ. Çемье девизĕ – «Манăн тĕрекĕм – çурт-йĕр тата çемье». Кил хуçи хуçалăхра ĕçлеме кăмăллать пулсан, мăшăрĕ апат пĕçерме, çыхма-çĕлеме юратать. Асăннă çемье спортпа та туслă: хĕлле йĕлтĕр сырăççĕ, çулла футболла, волейболла выляççĕ.

Уявра çавăн пекех «Атăлçири ăнăçлă çемье – 2014» конкурс-фестивале хутшăннă Адюковсемпе (Елчĕк районĕ) Фунтиковсене (Шупашкар хули) чысларĕç.

Республика конкурсне нумай ачаллă çемьесем хутшăнни савăнтарчĕ. Вĕсен йышĕнчех ача усрава илнĕ çемьесем те пур. Чылайăшĕ тĕпренчĕкĕсене ура çине тăратнă пулин те ют ачасене хăйсен хӳттине илнĕ. Сăмахран, Улатăр районĕнчи Алтышевăра пурăнакан Вера Ивановнăпа Анатолий Петрович Володинсем – ачасене çемьене йышăннă ашшĕ-амăшĕ. Вĕсен çумĕнче вунă ача «ăшăнать». Вĕсене хăйсен тĕпренчĕкĕсем пекех ĕçчен, тараватт, ăшă кăмăллă пулма, аслисене хисеплеме вĕрентсе çитĕнтереççĕ Володинсем. Ачасем юрлама, ӳкерме юратаççĕ, алĕç тума хăнăхаççĕ. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пахчара ĕçлеççĕ, вылăх-чĕрлĕх пăхаççĕ. Çакнашкал çемьесемпе чăннипех мухтанма тивĕç эпир. Вĕсем – Чăваш Ен чысĕ, Раççей мухтавĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## Купăстана чысласа

Йăлана кĕнĕ тăрăх пахча ĕçĕсем вĕçленсен республикăра çулсерен купăста фестивальне йĕркелеççĕ. Кăçал вăл Шупашкарта иртрĕ. Унта ватти-вĕтти хутшăнчĕ, юрласа-ташласа савăнчĕ.

Асăннă фестиваль пилĕк çул каярах йĕркеленнĕ. Куславкка районĕнчи Василий Семенов фермер пуçарăвĕпе çуралнă çак уяв. Маларах вăл ял, район шайĕпе çеç иртнĕ пулсан, халĕ унăн ахрăмĕ республикипе сарăлнă. Çавна май купăстана чыслама тĕрлĕ кĕтесрен килнĕ. Унран хатĕрленĕ апат-çимĕç куравĕ те йĕркеленĕ. Вĕсене тутанса пăхма май пулчĕ. Унсăр пуçне тухтăрсемпе косметологсем усăллă сĕнӳсем пачĕç. Купăстапа мĕнлерех чиперленмеллипе паллаштарчĕç.

Фестивале ЧР ялхуçалăх министрĕн çумĕ Ирина Кошкина усрĕ. Пурне те уяв ячĕпе саламларĕ, Василий Семенов хресчен (фермер) хуçалăхĕнче чылай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн Зоя Павлова тĕп агронома РФ ялхуçалăх министерствин тав хучĕпе чысларĕ.

Фестивале хатĕрленсе шкул ачисем хушшинче республикăра пултарулăх конкурсĕ иртнĕ. Çамрăк ăру çак пахча çимĕçе мухтаса ода, юмах çырнă. Çавăн пекех уяв тĕлне сăнӳкерчĕксен конкурсне те пĕтĕмлетнĕ. Çĕнтерӳçĕсене шăпах фестивальте чысларĕç. Çакна палăртма кăмăллă: конкурссене ачасем çеç мар, вĕрентекенсем те хутшăннă. Паллах, вĕсен пултарулăхне уйрăм хакланă.

Аслисем купăста турас, йывăрăшне виçес тĕлĕшпе ăмăртрĕç. Чи пысăккине чысласа пурне те курăнмалла çĕре вырнаçтарчĕç, ăна ятарлă пуç кăшăлĕ тăхăнтартрĕç. Çĕнтерӳçĕ-купăста Куславкка районĕнче çитĕннĕ. Вăл 13 кг та 455 г таять. Иртнĕ çул вара 16 кг таякани çĕнтернĕ.

Ял çынни авалтанах кĕркунне купăста тӳнĕ. Çак тĕлĕшпе те ăмăртрĕç ентешсем. Ахальтен мар фестиваль халăх йăли-йĕркине упранине палăртрĕ Василий Семенов фермер.

Уява хутшăннисем йӳçĕтнĕ купăста, хăяр, панулми хапăлласах туянчĕç. Унсăр пуçне çитес çул валли пахча çимĕç вăрлăхĕ илме те манмарĕç. Çĕр хут кĕпе тăхăннă «кинĕме» халалласа вара сцена çинче такмаксем янăрарĕç.

Чăн та, купăстана чысламалăх пур. Вăл пирĕн çĕршывра чи сарăлнă пахча çимĕçсенчен пĕри. Унра тĕрлĕ витамин пур, ытларах С витамин пухăнать. Купăстана хырăм, пыршă шыççинчен сыватакан Y витамин пурришĕн хаклаççĕ. Чирлĕ çынсене купăста сĕткенне ĕçме хушаççĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 3.12 | 4.12 |
| --- | --- | --- | --- |
| Температура, °C | 2–4 сехетре | −15 | −2 |
| | 14–16 сехетре | −3 | 0 |
| Юр çăвать | | *** | *** |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 748 | 742 |




Вклад
для физических лиц «Формула успеха»

Принимается
с 09.10.2014 по 09.02.2015

Вклад для физических лиц «Формула успеха» принимается с 09.10.2014 по 09.02.2015, на сумму от 3000 рублей РФ, максимальная сумма – без ограничений, срок – 540 дней без пролонгации. Ставка 9% годовых. Дополнительные взносы и расходные операции не предусмотрены. Выплата суммы вклада с начисленными процентами производится в день досрочного востребования всей суммы вклада или в день окончания срока вклада путем перечисления суммы вклада и причитающихся процентов на счет вкладчика, открытый в Банке. При досрочном востребовании вклада проценты исчисляются и выплачиваются за фактическое время нахождения средств во вкладе: до 91 дня по ставке вклада «До востребования» (0,01% в рублях РФ на 09.10.2014), свыше 91 дня и до 180 дней – 4%, свыше 180 дней и до 270 дней – 5%, свыше 270 дней и до 365 дней – 6%, свыше 365 дней и до 539 дней – 7%.

Вклады застрахованы
Система Страхования Вкладов

**ОАО «Россельхозбанк»**
**8 800 200-02-90 | www.rshb.ru**
Звонок по России бесплатный

Генеральная лицензия Банка России №3349 (бессрочная). Реклама

## Чăваш Ен экономикине — 27 млрд тенкĕ

Раҫҫей ялхуҫалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕ уҫăлнăранпа республикăри предприятисене 9 пин кредит (27,7 млрд тенкĕлĕх) панă. Ҫав шутран АПК отраслĕнчи объектсене юсама е ҫĕнĕрен тума – 20, техника тата ялхуҫалăх оборудованийĕ туянма – 14, вылăх-чĕрлĕх илме – 2, уй-хир ĕҫĕсене ирттерме – 34, ялхуҫалăхне аталантарма йышăннă патшалăх программине пурнăҫлама 30 процент кайнă.

2006 ҫултанпа банкăн регионри филиалĕ 154 инвестици проектне пурнăҫа кĕртме укҫа уйăрнă. Ҫав шутра вылăх-чĕрлĕх комплексĕсене, пахча ҫимĕҫпе ҫĕрулми хранилищисене юсаса ҫĕнетме тата тума, теплица хуҫалăхне йĕркелеме. Филиал директорĕ Ирина Письменская палăртнă тăрăх – филиал республика территорийĕнче явăҫтарнă укҫана регионри экономикăна аталантарма хывать. Фермăсенче, уй-хирте ҫĕнĕ технологипе, оборудованипе усă курни паха продукци туса илме май парать.

*РФ Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

**ВĂЙ ПАТĂР!**

# Ҫăматă туса шур пӳрт ҫĕкленĕ

### Инкек килсен чул та ҫунать

Икĕ чӳречеллĕ пĕчĕк пӳртре чăваш кĕвви янăрать. Кĕвĕ майĕпе вăтам ҫулсенчи хĕрарăм тăрăшсах ҫăматă йăвалать. Ҫамки тăрăх шапăртатса тар юхать. Ҫӳхе кĕпи те йĕпенсе ҫурăмне ҫыпҫăннă...

Алевтина Федорова шăпа хăйне яла ҫавăрса ҫитересси тĕлĕкре те тĕллĕнмен-тĕр. Аслă пĕлӳ илнĕ, хулари хăтлă хваттерте ҫемйипе савăнса пурăннă. Тата мĕн кирлĕ темелле?

– 90-мĕш ҫулсенче, ҫĕршывра пăтрашуллă тапхăр пуҫлансан, укҫа-тенкĕ енчен хĕсĕнсех ҫитнĕччĕ. Ҫапах яла куҫма шутламан темелле, – аса илет вăл. – Пурнăҫ лайăхланасса шаннă, кĕтнĕ.

Кĕтмен инкек ҫамрăк ҫемье пурнăҫне тĕпрен улăштарнă. Канмалли кун вĕсем тăван тăрăха, Ҫĕрпӳ районĕнчи Ямаша, хăнана килнĕ. Уяв хыҫҫăн хулана таврăнсан ҫӳҫĕ вирелле ҫĕкленнĕ. Хуҫисем пулманнипе усă курса вăрăсем хваттертен йăлтах ҫаратса тухса кайнă.

– Атте ҫакна пĕлсен: «Малашне капла мĕнле пурăнăр? Ялта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетсен, пахча ҫимĕҫ ҫитĕнтерсен пурăнма пулать-ха», – терĕ пире лăплантарса. Хваттере сутса яла куҫрăмăр. Кивĕ ҫурт-йĕр туянтăмăр. Эпĕ вырăнти «Союз» совхоза бухгалтер-экономиста вырнаҫрăм, – каласăвне малалла тăсать Алевтина. Пĕчĕк ҫуртра ҫемьене ҫаврăнмалăх та вырăн пулман. Анчах шалупа кăна ҫурт ҫĕклеймĕн. Хваттер укҫине инфляци ҫăтса янă.

Пирĕн йăх тымарĕ Чурачăкран тухнă. Кунта ялĕпех ҫăматă тунă. Астăваса кукамайпа анне те ҫĕрĕн-кунĕн ĕҫлетчĕҫ. Ачасене те ĕҫе явăҫтарнă, вĕрентнĕ. Антăранă кăвакал кутăн чăмнă тенĕн эпĕ те ҫăматă туса пăхма шутларăм.



Кайран, вырăнти предприятисем хупăнсан та, пуҫа усса ларман Алевтина. Хăйĕн цехĕнче хĕрсех ĕҫленĕ, ҫăматă хыҫҫăн ҫăматă калăпланă. Иртен пуҫласа сĕм ҫĕрлеччен, канма пĕлмесĕр тенĕн тар тăкнă. Мăшăрĕ те вăй хунă-ха, анчах пĕр шалупа кăна пысăк ҫемьене тытса пыраймăн. Лав йывăрлăхĕ ытларах арăмĕ ҫине тиеннĕ тесен те йăнăш пулмĕ.

– Тавара тума кăна мар, сутма та пĕлмелле-ҫке...

– Вăл вăхăтра Ямашра икĕ ҫемье кăна ҫăматă йăвалана. Канмалли кунсенче тепĕр хĕрарăмпа Канаша сутма ҫӳренĕ. Пасара ирирех ҫитес тесе ҫур ҫĕр иртни икĕ-виҫĕ сехетре тăрса ҫула тухаттăмăр. Тулли сумкăсемпе 8 ҫухрăм ҫуран утнă. Ҫăмне ялсем тăрăх пуҫтарса ҫӳреттĕмĕр. Тутарстана та ҫитнĕ. Выҫăллă-тутăллă, ҫывăрнă-ҫывăрман тенĕн нушаланнă. Халĕ аса илетĕп те хамран хам тĕлĕнетĕп: мĕнле чăтнă-ши?

### Ҫемье бизнесĕ

– Унтанпа шыв-шур чылай юхса иртнĕ те лару-тăру та улшăннă-тăр? – каласăва малалла сыпăнтаратăп эпĕ.

– Малтанхи хут кивĕ УАЗ туянсан хашах сывласа ятăмăр. Ҫăтмах ҫитнĕнех туйăнатчĕ: кирек хăш вăхăтра лар та тухса кай. Вăхăт иртнĕ май туянакансем хăйсемех килсе илме тытăнчĕҫ. Екатеринбург, Иваново, Тверь хулисем таранах саланать пирĕн тавар, ҫăматă йăваласа ĕлкĕр кăна. Ҫăмне те республика тулашĕнчен таптарсах килсе параҫҫĕ. Вырăнтине те йышăнатпăр.

Пысăк кăмакапа юнашар ларакан станока тĕлĕнсе сăнарăм. Алевтина Васильевна ăна ĕҫлеттерсе те кăтартрĕ. «Кун пеккине суту-илӳре курманччĕ-ха», – пытармарăм тĕлĕннине.

– Унччен ҫăматта алăпах кĕҫҫелентернĕ. Йывăрччĕ, каҫ енне хулҫурăм ыратмах тытăнатчĕ. «Питĕ хĕрхенетĕп-ҫке сана. Станокпа пулăшам-ха», – тесе паллаканăм туса пачĕ. Капла ҫăмăлрах ĕнтĕ. Ҫапах алăпа ĕҫлемелли те пайтах.

– Кăткăс ĕҫе мĕнрен пуҫăнатăр-ха?

– Ҫăм суйласа илнинчен. Кĕрхи ҫăм – кăҫатă, ҫурхи алсиш-чăлха валли каять. Хăш-пĕр чухне ҫурхипе кĕрхине хутăштарса килсе паракансем те пур. Ун пеккипе ĕҫĕ нумай, тавар пахалăхĕ те чакать. Тĕлĕнмелле, вырăнти ҫăмран ҫăматă илемлĕрех, лайăхрах пулать. Таптарнă ҫăма ятарласа хатĕрленĕ линолеум ҫине хурса касатпăр, кĕҫҫелентеретпĕр, калăплатпăр. Кайран ҫăлри шывпа ҫуса тасататпăр, кăмакара типĕтетпĕр.

Ҫĕнĕ ҫурт хăпартса лартсан та киввине пăсман вĕсем, пĕчĕк цех йĕркеленĕ. Кăмакине ҫеҫ пысăклатнă. Алевтина Васильевна кăмака питлĕхне усса вĕр ҫĕнĕ кăҫатăсем туртса кăларчĕ. Халĕ кунчи – шурă, лаппи хура тĕсли модăра иккен. Екатеринбургра пурăнакансем уйрăмах ăна кăмăллаҫҫĕ.

– Мĕнле илемлĕ, – ытараймасăр тинкертĕм вĕсене.

– Мухтанса каламастăп, анчах ĕҫе ҫиелтен тума хăнăхман. Япăх тавара кам туянтăр? Пахалăх кăҫатăна йăвалаланинчен, ҫăмне тытăнтарнинчен, типĕтнинчен нумай килет. Йĕркеллĕ типĕтмесен те формине ҫухатать, хытать.

Ямашра та конкуренци ӳссех пырать. Агрофирма хупăнсан ĕҫсĕр юлнă ҫынсем хушма хуҫалăх аталантарса, ҫăматă йăваласа укҫа тăваҫҫĕ. Ҫĕр киллĕ ялта вунă ҫемьен пĕчĕк цех хута кайнă.

– Ҫулталăкра сирĕн ал витĕр миҫе мăшăр ҫăматă тухать-ши?

– Ҫурт-йĕр тунă, ачасене хваттер илсе панă чухне ҫитмĕл ҫичĕ хут та тар тăкма тиврĕ. Пĕринче юриех шутласа пытăм, ҫулталăкра 1500 кăҫатă турăм. Ун чухне хĕлĕн-ҫăвĕн, пĕр канмасăр тенĕн ĕҫленĕ. Халĕ сезон вĕҫленсен, тавар кайма пăрахсан канатăп. Каҫхине ахаль ларасран алсиш-чăлха ҫыхатăп, кил-тĕрĕшре тăрмашатăп. Ҫăматă йăвалани вăй-хала, сывлăха илет. Хул-ҫурăм та час-часах сурать. Тата 20 ҫул пĕр ĕҫ ывăнтарчĕ-ши, тен, йăлăхтарчĕ те.

### Пĕр хăнăхсан...

– Сирĕн ĕмĕтленни пурнăҫа кĕнĕ темелле: чаплă ҫурт-йĕр ҫавăрнă, ачасене ӳстернĕ, апла мĕншĕн ҫаплипех тертленетĕр-ха?

– Мăшăрăм та: «Ан нушаланха тек, ҫемьене тăрантармалăх ĕҫлесе илетĕпех ĕнтĕ», – тет хĕрхенсе. Мана йывăррине, ывăннине курса тăрать-ҫке. Хушма хуҫалăхра вылăх-чĕрлĕх те йышлă усратпăр, аш-какай, сĕт сутатпăр. Укҫа енчен татăлса кайман темелле. Ҫапах пĕрре ĕҫлеме хăнăхсан пăрахма та йывăр. Тата икĕ хĕрĕ те аслă шкулта вĕренет. Вĕсене пулăшас килет. Кĕҫĕнни шкула кăна каять-ха.

Сăмах ҫиппине сӳтнĕ хушăра пӳрте 9 ҫулсенчи хĕрача кĕрсе тăчĕ. «Аннем, мĕнпе пулăшмалла?» – ыйтрĕ вăл чĕвĕл-чĕвĕл сассипе. Амăшĕ хĕрĕ ҫине ăшшăн пăхса илчĕ.

– Катьăпа Ирина килтен тухса кайнă хыҫҫăн ҫурт пушанса юлнă пек туйăнчĕ. Наташа шкултан таврăнасса кĕтсе кăна тăратăп. Упăшка кунĕпех ĕҫре, кампа калаҫса чуна уҫмалла? – терĕ вăл. – Питĕ арҫын ача кĕтрĕмĕр, Турри вара виҫĕ хĕр парнелерĕ. Халĕ пĕртте ӳкĕнместпĕр. Вĕсем арҫын ачасенчен те ирттереҫҫĕ: утă ҫулаҫҫĕ, кирлĕ пулсан алла пăчкă-пуртă та тытаҫҫĕ. Водителе те вĕренсе тухрĕҫ. Нумаях пулмасть хăнана лартса кайса килчĕҫ. Ашшĕпе чунчĕререн савăнтăмăр.

– Ҫăматă тăвас ăсталăха вĕренсе ҫитрĕн пулĕ, – тетĕп хĕр пĕрчине. Вăл пуҫне сĕлтнине кура малалла тĕпчетĕп. – Апла аннĕр ĕҫне малалла тăсакан пур.

– Ҫук, анне пек нушаланас килмест. Урăх професси суйласа илĕп, – пытармасть шухăшне Наташа.

– Йăлтах хамăр тар тăкса турăмăр ҫав. Патшалăхран пĕрре те пулăшу илмен. Кил-ҫурта йывăрпа ҫĕклерĕмĕр, пĕчĕк бизнес уҫма грант памарĕҫ, амăшĕн капиталне те тивĕҫеймерĕмĕр. Йывăрлăх пире ҫирĕплетрĕ кăна. Ĕҫре пиҫĕхсе ӳсни ачасене те пурнăҫ ҫулне тĕрĕс суйласа илме пулăшрĕ.

**Лариса НИКИТИНА.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕ.**

XXI ĕмĕрти Кулибин

# Вăхăт çитрĕ тав тума

**Ют çĕршывра пурăннă пулсан пĕр-пĕр чаплă завод ăна хайĕн патĕнче ĕçлеме ӳкĕте кĕртме тăрăшĕччĕ. Аслă пĕлӳ çуккине пăхмасăрах. Ăсĕ мĕне тăрать! Хальхи çыннăн пуçĕ пултарнинчен 2-3 е 4-5 процент таран кăна ĕçленине палăртаççĕ ăсчахсем. Ытти "çывăрать", Турри пулăшсан та вăратма тăрăшмастпăр. Канаш районĕнчи Ухман ялĕнче пурăнакан Петр Иванович Архипов вара Турă панине пĕчĕклех туйнă пулĕ çав, пĕве кĕрсен çакна аван ăнланса илнĕ, паян унăн хăватне тата тарăнрах тишкересшĕн. "Хама пулăшнăшăн ăна тав тума вăхăт çитрĕ", – тет 35 çула пуснă Кулибин-маçтăр. Мĕнлерех тав тума шухăшланине вулакана кăшт каярах пĕлтерĕпĕр.**

**Петр Архипов чăннипех те XXI ĕмĕрти Кулибин-ăстаçă. Çак ята ял çынни Раççей шайĕнче иртнĕ конкурсра ĕнентернĕ: вун-вун ĕç тума пултаракан трактор ăсталаса конкурс ĕçĕсене хаклакан йыша тĕлĕнтернĕ. Эпир те вулакана тĕлĕнтерер – шкулсăр пуçне урăх ниçта та вĕренмен ăстаçă. Ĕç айне пулнăран юлашки вĕренӳ çулне йĕркеллĕ вĕçлеме те вăхăт çитсе пыман.**



## Килти завод

4-5 çултах хăйне кăсăклантарнă япаласене салатма тытăннă вăл. Салатнă хыççăн пуçтарма та хăтланнă. Ăнланнă-ши ун чухне хăй мĕн пĕлесшĕн çуннине? Темле çав, анчах ашшĕ-амăшĕ вăрçасран хăраса кравать айĕнче арçынсен сухал хырмаллине те, пӳртри сехетсене те сӳтсе тĕрĕсленĕ. Мĕнрен мĕн пулнине йăлт пĕлес килнĕ пулĕ çав. Ӳсерхепе велосипед çине куçнă. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне ачан килте ятарлă "завод" пулнă. "ВРЗ" ятлăскер. Канашри вакунсем юсакан заводах мар пулĕ тетĕр-и? Çук. Велосипед юсакан завод. Вырăсла куçарсан сăмахсен пуçламăш саспаллийĕсемпе шăпах ВРЗ (велосипедно-ремонтный завод) пулса тухать. Пĕчĕк çеç хуралтă малтанах ачан мастерскойĕ пулнă, унта вăл юсав ĕçĕнче кирлĕ хатĕр-хĕтĕр вырнаçтарнă. Ялти ытти ачасем пырса çӳренĕ, мĕн ĕçленипе кăсăкланнă. Çапла пĕчĕккĕнех Петĕр велосипедсем юсама тытăннă. Каярах мотороллер ăш-чикĕнче чакаланнă, пĕлмен-туман япала хăварман. Ашшĕ водитель пулнăран килте "Москвич" машина ларнă. Шкул ачи ăна та тĕпрен тĕрĕсленĕ, моторне пĕр-пĕччен салатса пуçтарнă. Çакна кура пĕлекенсем ăна-кăна юсама саккас парсах тăнă.

Пĕчĕк мастерской тивĕçтермен. Ача пахчари слива йывăççисене касса юсамалли пӳлĕме пысăклатма шут тытнă. Ашшĕ-амăшĕ каллех Петĕре пăсăрлантарнă: "Мĕн тăван? Мĕн хăтланатăн?" Ачаран тĕлĕнмелле ăстаçă пуласса малтанах ĕненмен те-и тен. Е шкулта лайăххах вĕрентĕр тесе тустарнă.

## Аларан тухнă "МIРI"

"Мĕншĕн малалла вĕренес темен-ха? Тен, халĕ пĕр-пĕр должносçри çын пулăттăн", – ыйтатăп Петр Ивановичран. "Алла ручка тытса пуçа ĕçлеттерем пек тăвасси мана валли мар, – тет вăл. – Техникăн, механизмăн хăш пайĕ мĕнле ĕçленине курса, алăра тытса пуçпа хамăн ăнкармалла. Должносçри çын хăйĕн аллипе ĕçлесе лармасть. Пĕтĕмпех хăй тума хăнăхнă çын та пуçлăха каймасть. Хам шухăшласа тупсăмне тупнă, хам алăпа пуçтарнă япала, пĕлетĕр-и, мĕнле савăнтарать! Тунă, тăватăп та, çын пулăшу ыйтма пырсан тĕрĕс сĕнӳ пама пултаратăп".

Урăхла пулма та пултараймасть. Нимĕнле схемăсăр, чертежсăр вăл килĕнче трактор пуçтарнă. Ятарласа конкурс валли мар. Хăйĕн ĕçĕ çинчен ытлашши çырма кирлĕ маррине аса илтерсех тăракан çамрăк сăпайлă пулнăран ун çинчен пач шухăшламан. Вăхăт çитсен çемьерен уйрăлса тухмаллине пĕчĕкрен асра тытнă. Килте кĕçĕн шăллĕ юлать. Çавăнпа таса уйра çурт лартмалла. Строительствăри йывăр ĕçе çăмăллатас тĕлĕшпе пуçăннă та меллĕ трактор тума. Хăйне кирлĕрен ĕнтĕ. Тăпра турттарма тата ытти материал çĕклеме, кайса тăкмалли техника шутсăр кирлĕ пулнă. 4 çул тăрмашнă хыççăн унăн алли витĕр çĕнĕ техника тухнă. Хăйĕн тракторĕпе кăна аппаланнă пулсан вăл ăна çур çултах пуçтарĕччĕ. Çамрăкăн ытти ĕç нумай-çке. 76 лаша вăйĕллĕ трактор суха тума та, курăк çулма та, вутă-шанкă турттарма та пултарать. Хыçалти кăкаркăчĕ çумне темĕнле агрегат та çаклатать. Хăнăхнă "Беларуç" трактор пекех. Анчах та умра тиемелли ăскăч пур, унпа çĕре касса тӳрлетме, тикĕслеме, строительство материалне пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçарма пулать тата ытти те.

Акăлчанла "MIPI" ят панă ăна ăстаçă. Вырăсларан чăвашла куçарсан – Петр Иванович ячĕллĕ мастерской (мастерская имени Петра Ивановича). Акăлчан ятĕнчи кашни саспалли пĕлтерĕшлĕ. Пĕрремĕшĕ амăшĕн ятне пĕлтерет (Мария), иккĕмĕшĕ – ашшĕнне (Иван), виççĕмĕшĕ хăйĕн.

Универсаллă техникăна курсанах Шупашкарти трактор музейĕн (Раççей шайĕнчи "XXI ĕмĕрти Кулибин" конкурс шăпах унта иртнĕ) ертӳçи: "Куна антарса лартмасан та юрать. Конкурсăн хавхалантарулла премине тӳрех памалла та каялла кайтăр. 4 çул хушшинче конкурсра кунашкаллине курма тӳр килмен. Çĕнтересси ахалех паллă", – тесе патлаттарнă. Витĕр курнă тейĕн. Конкурса хутшăннă 19 çынран пултарулăхпа Петр Архипова çитекенни пулман.

Ытти регионтан техника сахал тăратни пăшăрхантарнă ăна. Инçетрисен пултарулăхне ытларах курса хаклас, паллашас килнĕ ял çыннин. "Çулĕ инçе, хавхалантарулла укçа сумми пĕчĕкрен тапаçланас темен пулĕ", – тет вăл.

Конкурс ĕçĕсене хаклакансен йышĕнче ăслăлăхпа тĕпчев тытăмĕнче тăрăшса опыт илнĕ конструкторсем те пулнă. Тĕслĕхрен, Раççейĕпе сарăлнă "Миконт" пĕрлешӳрен. Вĕсем Петр Архипов каласа кăтартнине тимлĕ итленĕ, унăн шухăшĕсемпе килĕшнĕ, анчах ял çамрăкĕ вун-вун ĕç тума пултаракан трактора хут çинчи схемăсăр пуçтарнине ĕненесшĕнех пулман.

## Тĕрĕс шухăш

Теоретиксем практикăна ăнлансах каймаççĕ тени, тен, тĕрĕсех. Кирлĕ вăхăтра вĕсем тĕрĕс шухăш калаймасни те пулать. "Тăвас тени чи малтан ăна мĕнле курнинчен, шухăшран пуçланмалла. Шухăшланине тума пултаракан çын талантлă. Калăпăр, математикăна пĕлни пĕр япала, пуçа тĕрĕс шухăш кĕни – урăххи. Теорипе ĕçлекенсем темĕн ĕнентерме те пултараççĕ, анчах çав тери кирлĕ самантра тĕрĕс шухăш тупаймаççĕ, техникăн пĕр-пĕр пайĕ вансан чи меллĕ вариант сĕнеймеççĕ, – палăртать Петр Иванович. – Практик пĕрре пăхать те калать, кирек епле çавăрттар унăн сĕнĕвне, шăп çав вăхăтра юсамалла-тăк лайăххаххине тупаймастăн".

"Эх, пирĕн патра ĕçлемелле санăн", – тенĕ унăн тракторне курса тĕлĕннĕ Шупашкарти конструкторсем. "Кам пулса пырăн? Картиш шăлакан-и?" – ыйту çине ыйту панă ял ачи. Лешсем чухламанран професси çуккине пĕлтернĕ. Вĕренме кирлине хыççăн каласа пăрахнă: "Пурнăçа вĕренӳре ирттерĕ пулсан ĕç тума, опыт пухма вăхăт çитместчĕ. Ялан практикăра чухне теори валли вăхăт çук. Иккĕшне те "хăваласа" çын хаклă пултарулăх пухаймасть. Теорипе практикăн пĕрле хутшăнса ĕçлемелле", – тенĕ.

Шел те, унăн тĕслĕхĕнче паян практика теори çумне çыпçăнаймасть. Вĕреннине ĕнентерекен хутсăр малалла утăм тума çук. Тепĕр енчен пăхсан, хăйне чаплă конструктор тесе шутлакан çын ниçта вĕренмен, никам пĕлмен ял ачине хăйĕнчен иртерĕччĕ-ши? Пултарулăхне хаклама пĕлĕччĕ-ши?.. Ахаль çын теприн ĕçĕпе чунтан савăнма, хĕпĕртеме пултарать, пуçлăхсем, ертӳçĕсем хушшинче унашкалли сайра.

## Маçтăр Турăран уйрăлмасть

Ухманти Петр Иванович Архиповăн ырă ячĕ тахçанах республика тулашне тухнă. Техникăна васкавлă юсамалла чухне ун патне пыраççĕ. Мускавран, ытти хуласенчен шăнкăравласа сĕнӳсем ыйтаççĕ. Хăйĕн çинчен ытлашши калаçтарма юратмасть вăл, анчах пĕр юлташĕ теприне пĕлтерет, хыпар виççĕмĕшĕ патне çитет. Урхамахпа чупать тейĕн ырă ят. Телефонпа çынна йăлт каласа ăнлантарма йывăр – специалист машинăри çитменлĕхе куçпа курмасть. Шăнкăравлакан техникăна хăй чухласа каймасан кăлтăка тупма пушшех те кăткăс. Анчах Кулибин-маçтăр сĕнӳ-канашпа пурне те пулăшать. Çакă ăна хăйне те савăнтарать.

Тата вăл ялан Турăпа пĕрле пулнишĕн хĕпĕртет. Унсăр пурăнма пултараймастăп, пурăнас та килмест тет. Çурт тума тытăннăранпа темĕн тĕрлĕ йывăрлăхра та пулăшнă вăл ăна, кирлине йăлт парса тăнă. Çакна кура пĕр вăхăт çамрăк унран ыйтма та аванмарланнă. Ара, шухăшлани пурнăçлансах пынă.

17 çулта чухне Турра чунĕпе, ăсĕпе ăнланса илнĕ вăл. Пĕр вăхăтра кӳрентерекенсем тупăннăран унăн аллине кĕлĕ кĕнеки лекнĕ. Ăна вуланăçемĕн Турра юратма пуçланă. Вăл ăна пĕчĕкренех упраса ӳстернине ăнланса илнĕ: усал патне яман, ялан ĕçре тытнă, интерес парса тăнă. Мĕн тусан мĕн пуласине вĕрентнĕ тейĕн.

Петр Иванович Турăпа хальччен сахал кăсăкланнишĕн, пĕли-пĕлми кӳрентернĕшĕн хуйхăрать. Çавăнпа çак çитменлĕхе пĕтересшĕн те вăл, Туррăн саккунĕсене ытларах пĕлесшĕн. Юратнă мăшăрĕпе хĕрачипе кашни эрнере чиркĕве çӳреме тăрăшать. "Техникăна эпĕ йăлт тĕпченĕ. Машина-трактор тăвас тытăмра паянхи кун маншăн тĕлĕнмелли çук. Космос карапĕ, ракета тăвас ĕç вăрттăнлăхĕ патне çитме шухăшламан. Техникăна пĕлни мана тăрантарать, укçа парать. Анчах Турă пулăшмасан эпĕ унпа та ĕçлес çук. Техника чунри тарăхăва, çемьери хирĕçĕве чараймасть, çынна лăпкăлăх параймасть. Машина-трактор тĕлĕшпе манăн кăмăл тулнă – çĕнĕ куç уçăлнă темелле. Никамран вăтанмасăр, хăрамасăр калама пултаратăп: Турă вĕрентĕвне ăса илесси маншăн халĕ тĕп вырăнта", – пĕрре тĕлĕнтерчĕç, тепре шухăша ячĕç XXI ĕмĕрти Кулибин-маçтăр сăмахĕсем.

**Ирина НИКИТИНА.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, декабрĕн 8-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
20.45 «ЗНАК КАЧЕСТВА ЧУВАШИИ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытларикун, декабрĕн 9-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ВРЕМЯ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юнкун, декабрĕн 10-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ (12+)
20.30 «ВРЕМЯ ВКУСА» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерникун, декабрĕн 11-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
20.15 «НА ПОСТУ № 1» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрнекун, декабрĕн 12-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăматкун, декабрĕн 13-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)
9.30 «ЧЕБОКСАРСКОЕ ХУДОЖЕСТВЕННОЕ УЧИЛИЩЕ. 80 ЛЕТ» (6+)
10.00 «КУÇА КУÇĂН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (16+)
17.00 «ВРЕМЯ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
17.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
18.00 «АВАН-И» (12+)
18.30 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
19.00 «ЮРĂСЕН ЮРРИ» КОНЦЕРТ (12+)

**Вырсарникун, декабрĕн 14-мĕшĕ**
9.00 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
9.15 «ĂНСĂРТРАН КĔМСĔРТ». КАМИТ (12+)
10.00 «ПОПУГАЙЛĂ ХĔРАРĂМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
18.00 «ЮРАТСАН ЮРЛАС КИЛЕТ». В. ЛЕКАНОВ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Декабрь, 3 – юнкун | Декабрь, 4 – кĕçнерникун | Декабрь, 5 – эрнекун | Декабрь, 6 – шăматкун | Декабрь, 7 – вырсарникун | Декабрь, 8 – тунтикун | Декабрь, 9 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.01 | 8.02 | 8.04 | 8.05 | 8.07 | 8.08 | 8.09 |
| | анать | 15.20 | 15.19 | 15.18 | 15.18 | 15.17 | 15.17 | 15.16 |
| Кун тăршшĕ | | 7.19 | 7.17 | 7.14 | 7.13 | 7.10 | 7.09 | 7.07 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (15.26) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 11-мĕш кун | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун |
| | | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче |

«ТĂВАН АТĂЛ»: ÇĔНĔ НОМЕР

**Альбина МЫШКИНА**

# Çын çинчи ача

## Калав

*(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте)*

Юлашкинчен директор Петĕре хăй пӳлĕмне кĕме чĕнчĕ.

– Ыран шкула вăхăтра çитме тăрăш, – питĕ кăмăлсăр саспа каларĕ директор. – Кĕнекесене тепĕр хут кĕрсе ил библиотекăран...

Петĕр каллех шкула таврăнчĕ. Малтанхи кунсенче Алина Ивановна унпа пĕрле уроксенче те ларчĕ. Учительсем ачапа шăл витĕр пулсан та лăпкăн калаçма тăрăшрĕç. Тепĕр чух темăна урок хыççăн хăварса та ăнлантарчĕç. Петĕр хăй те тăрăшрĕ – тăхтав вăхăтĕнче те, килте те кĕнекесене алран ямарĕ. Маларах вĕрентнине тишкерсе хăй тĕллĕн ăнланма тăрăшрĕ. Класри ачасенчен пулăшу ыйтма хăяймарĕ – вĕсем пурте яка çи-пуçлă, тутă, укçаллă. Вăл вара – ĕçке ярăннă хĕрарăм ывăлĕ. Кам хисеплетĕр ăна.

Анчах пĕррехинче класри чи хитре хĕрача Шура хăй пырса хăйĕн пулăшăвне сĕнчĕ ăна. Петĕр питĕ именчĕ пулсан та килĕшрĕ. Унăн Алина Ивановна умĕнче айăпа кĕрес килмерĕ – кахал е ухмах ача тесе ан шутлатăрччĕ вăл. Шура кӳршĕллĕ подъездрах пурăнать иккен. Мĕнле асăрхаман çакна халиччен вăл. Шура хăй илемне кура Петĕр пеккисене асăрхамалла та мар пек, анчах вăл пĕртте мăн кăмăллă пулмарĕ, Петĕрпе яланах вашават та çепĕç каласрĕ. Çакна кура класри ытти ача та Петĕрпе малтан сывлăх сунма, каярах вăйăсем выляма та пуçларĕ. Урок тума, ăнланман темăна ăнланма та пулăшрĕç. Тем вăхăтран Петĕр хăй те сисмерĕ – учитель урокра мĕн каланине лайăхах ăнкара пуçларĕ, класс журналĕнче те унăн иккĕсем вырăнне виççĕ-тăваттăсем, хăш-пĕр предметпа е темăпа пиллĕксем те курăна пуçларĕç.

Класри пĕр ача çеç – Костя – çаплипех ютшăнчĕ унран. Теме пула тăшман çине пăхнă пек пăхрĕ. Çакăн сăлтавĕ Шура пулни вара Петĕрĕн асне те килмерĕ. Тĕрĕссипе каласан – ăна класри пач урăх хĕрача – Катя – ытларах килĕшет. Çи-пуçĕ те унăн Петĕрĕнни майлах капăр та пуян мар, сăмахлама та ытлашши юратсах каймасть. Типтерлĕ, сăпай. Çак хĕрачапа çывăххах туслашма кăмăлĕ çав тери пысăк, анчах хăю çитереймест. Майĕ вара пач ăнсăртран тупăнчĕ.

Пĕррехинче Шурăпа Петĕр велосипедпа ярăнатчĕç. Вĕсен çумне Костя та ерчĕ. Вăл Петĕрпе мăрт-март çеç калаçрĕ пулин те арçын ача кӳренмерĕ. Катя пурăнакан подъезд умĕпе иртнĕ чух: "Айтăр, Катьăна та пĕрле ярăнма чĕнер", – сĕнчĕ Петĕр. Юлташĕсем хирĕçлемерĕç, Катя хăй те хаваспах килĕшрĕ. Костя ăна хăйĕн велосипедне пачĕ. Тăваттăн ярăнчĕç çав кун ачасем. Ытти кунсенче вара Петĕр кашнинчех хăйсемпе пĕрле уçăлса çӳреме Костьăпа Катьăна чĕнчĕ. Çапла сисмесĕрех Костя Шурăпа, Петĕр Катьăпа мăшăрлă çӳре пуçларĕç. Тем вăхăтран Костя Петĕрĕн чи çывăх юлташĕ пулса тăчĕ. Питех те савăк та кăмăллă вăхăт пек асра юлнă ун чухнехисем Петĕр чунĕнче. Анчах инкекĕсем йăлтах сирĕлмен иккен пулнă-ха унăн. Çапла пĕррехинче яланхи пекех подъезд умĕнче Алина Ивановна ĕçрен таврăнасса кĕтсе ларатчĕ вăл. Тахăш самантра "Полиция" тесе çырнă машина пырса чарăнчĕ, ним сăмах каламасăрах Петĕре машинăна тĕксе кĕртсе лартрĕç. Пĕтĕмпех питĕ хăвăрт пулса иртнĕрен ача тарса ӳкме мар, мĕн пулса иртнине те ăнкарса ĕлкереймерĕ. Костьăн кĕсье телефонне вăрланă тесе айăплаççĕ иккен ăна. Кĕсйинче унăн чăнахах та телефон пурччĕ, анчах Костьăн мар, Алина Ивановна парнелени. Петĕр ăнлантарма тăрăшрĕ – итлесшĕн те пулмарĕç.

Мĕнпе вĕçленĕччĕ-ши çак пăтăрмах – шăпине каллех Алина Ивановна тӳрлетрĕ. Пĕлнĕпĕлменех полици уйрăмне чупса килнĕ вăл. Петĕре тытса килнĕ участковăйпа питĕ хĕрӳллĕн калаçрĕ. Телефон документĕсене кăтартса Петĕре "читлĕхрен" кăларчĕ. Арçын ача асĕнче вара Алина Ивановна участковăйне каланă сăмахсем ĕмĕрлĕхех юлчĕç.

– Эсир влаç çынни пулсан сирĕн чи малтанах тăлăх ачана хӳтĕлесси пирки шухăшламалла, эсир вара унран айăпли тăвасшăн. Çĕршывра тĕрмесем пушă лараççĕ-им? Е çаратакан, вĕлерекен, пусмăрлакан сахал? Эсир влаç çынни пек пулса ачан амăшне юсанма пулăшăр. Вара вăл та чĕрĕ амăшĕ пур çинчех тăлăх пулмасть.

Хăй чĕппине хурчăкаран хӳтĕлекен кайăк евĕрех курăнчĕ çак самантра Алина Ивановна. Çамрăк участковăй та аванмарланчĕ пулас – Петĕр еннелле аллине тăсрĕ: "Каçар, шăллăм, ывăра ан ил. Йăнăшрăм", – терĕ.

Тепĕр куннех вăл Петĕр шкултан килме ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен çитсе тăчĕ. Амăшĕпе чылайччен калаçрĕ. Ĕçке ерниннчен сипленме ӳкĕтлерĕ ăна, сипленнĕ хыççăн ĕçе вырнаçма та пулăшма пулчĕ. Амăшĕ аран-аран пулсан та сипленме килĕшрĕ. Петĕр вара çав вăхăтра Алина Ивановна патĕнчех пурăнчĕ. Участковăй та ача патне эрнере темиçе хут кĕрсе тĕрĕслесе тăчĕ. Кашнинчех е хăйĕн машинипе ярăнтарчĕ, е тата хăйпе пĕрле спорт залне илсе кайрĕ.

Тепĕр çур çултан вара Петĕр амăшĕ хăйсен çурт картишнех пăхса тăракан пулса ĕçле пуçларĕ. Участковăй хăй сăмахне тытрĕ – тĕрлĕ кантура çӳресе хĕрарăма ĕçе вырнаçма пулăшрĕ. Çак самантран Петĕр шкула кайиччен иртерех тăрса амăшне пулăша пуçларĕ. Тинех Петĕрсен килĕнче те çемçе çăкăр, вĕри апат шăрши сарăлчĕ. Петĕр пурнăçĕ те канăçланчĕ. Амăшĕ вуçех ĕçме пăрахаймарĕ, паллах, анчах ĕлĕкхи пек йăлт сӳтĕлсе кайни пулмарĕ.

– Ывăлăм, çĕклемсем йывăр, пулăшсамччĕ мана.

Шухăша путнă салтак хăйне каллех ача чухнехи пек туйса илчĕ. Çак çемçе те ăшă сасă уншăн чи çепĕç юрăран çепĕçрех янăрарĕ. Ĕнтĕ умĕнчи хĕрарăмран икĕ пуç çӳллĕрех качча хăйне каллех хӳтлĕхлĕ туйса илчĕ.

– Кĕтсе илтĕм тинех, – салтака çупăрларĕ хĕрарăм. – Çавăнса çитрĕн эппин.

– Çитрĕм, анне, – ыталарĕ ăна Петĕр.

Икĕ çын илтмелле çеç пулчĕ "анне" сăмах, анчах çӳп-çап бакĕсем патĕнче эрех-сăра кĕленчи шыракан кивĕ кĕпе тăхăннă хĕрарăмшăн çак сăмах уяр кунра аça çапнăнах янăрарĕ.

– Çаврăнса çитрĕн иккен-ха, ывăлăм, – пăшăлтатса çеç каларĕ вăл. Пуçне пач çĕклемесĕр. Пăхса та илмерĕ – çаплах çӳп-çап ăшĕнче чакаланчĕ. – Апла малашне пурăнатпăр, апла пурнăç каять, манăн çын çинчи ывăлăм, манăн хӳтлĕхĕм.

## Вăхăтра çырăнăр – «Хыпарлă» пулăр!

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54800 | Хыпар | 732-66 |
| 78353 | Хыпар-шăматкун | 304-08 |

ШУТ-ХИСЕП

## Юратса пĕрлешетпĕр, тарăхса уйрăлатпăр

Республикăри Юстици министерстви палăртнă тăрăх – кăçалхи вунă уйăхра Чăваш Енре 8154 çемье мăшăрланнă. Уйрăлакансен йышĕ вара 4008-па танлашать.

Мăшăрсем уйрăлас тĕлĕшпе тăхăр уйăхри кăтарту тăрăх – Чăваш Ен Раççей регионĕсен хушшинче тăххăрмĕш вырăн йышăнать. Федерацин Атăлçи округĕнче çак кăтарту Тутарстанпа тата Мордва Республикипе пĕр тан пулнине çирĕплетет.

ЗАГС органĕсем уйрăлакансемпе ыйтăм ирттереççĕ. Унта хутшăннă 3124 çынран 4,2 проценчĕ пĕрле çулталăк та пурăнман. Мăшăрланнă хыççăн малтанхи 5 çулта уйрăлма тĕв тунисем – 32,5 процент. Уйрăлакансенчен 27 проценчĕ çемьеллĕ пурнăçпа 5-10 çул пĕрле пурăннă, 28,3 проценчĕ – 10-25 çул, 8,2 проценчĕ чĕрĕк ĕмĕр пурăннă хыççăн уйрăлнă.

## Кашни пепке телей курма çуралать

Чăвашстат кăтартăвĕ тăрăх – кăçалхи январь-октябрь уйăхĕсенче республикăра 14576 ача çуралнă, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 0,2 процент (30 ача) нумайрах. Асăннă тапхăрта кăçал 13809 çын вилнĕ, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 0,2 процент (21 çын) ытларах. Çуралнисен шучĕ вилнисенчен 5,6 процент (иртнĕ çул 5,5 процент) нумайрах.

Ведомство кăтартăвĕпе тĕнчене килнĕ 5923 пепке çемьере пĕрремĕш ача шутланать, 6186-шĕ – иккĕмĕш, 1894-шĕ виççĕмĕш, 573-шĕ тăваттăмĕш е ун хыççăнхи.

Федерацин Атăлçи округĕнче кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче 29,9 пин ача çуралнă, 31 пин çын çут тĕнчерен уйрăлнă. Вилнисен шучĕ çуралнисенчен 1,03 хут нумайрах.

Кăçалхи вунă уйăх кăтартăвĕ тăрăх – Атăлçин çичĕ регионĕнче халăх хăй еккипе ӳссе пыни палăрать: Тутарстанра (+7586 çын), Пушкăртстанра (+5259 çын), Удмурт Республикинче (+2156 çын), Пермь крайĕнче (+1867 çын), Чăваш Енре (+784 çын), Мари Республикинче (+742 çын) тата Оренбург облаçĕнче (+569 çын). Чулхула облаçĕнче (–9492 çын), Саратов облаçĕнче (–4685 çын) тата Самар облаçĕнче (–4094 çын) халăх чакни палăрать.

Росстат кăтартăвĕпе Атăлçи регионĕнче 1 пин çын пуçне çуралакансен йышĕ 13,5 (Раççейре – 13,4) шутланать. Мари Республикинче (1 пин çын пуçне 15 пепке), Пушкăртстанра, Тутарстанра тата Пермь крайĕнче (14,9) ытларах ача çуралать, Мордва Республикинче тата Пенза облаçĕнче – чи сахалли.

Чулхула тата Киров облаçĕсенче вилекенсен шучĕ ытларах, Тутарстанра тата Удмурт Республикинче вара – сахал.


РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

*ПРОДАЮ СУТАТĂП*

2. **АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

3. **АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.


**ТĂВАН АТĂЛ**

«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 11529 | Тăван Атăл | 319-08 |
| 24608 | Капкăн | 185-04 |

**ХРЕСЧЕН САССИ**

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54838 | Хресчен сасси | 376-62 |
| 43887 | Хресчен сасси-Кил | 184-08 |

Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!


«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)

Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4633
Тираж 4547

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.